**Кириллов, Тарас Кириллович (1880-1921).**
**Çывăхри ял-йышсем [хайлаври сыпăк]**

XII

Эй, ман Туррăм, Çăлаканăм!
Ĕçĕме пилле, тасат.
Ырă ăс Санран ыйтатăп:
Манăн ăсăма çутат.

Сывлăшу мана çĕнеттĕр,
Хытнă чĕреме çемçет.
Сăмаху мана вĕрентĕр,
Ăслăлăх Санран килет.

Пĕр Сана анчах пĕлетĕп,
Ирĕкне мана пĕлтер.
Çăлăнăç санран илетĕп,
Савăнтар, хĕпĕртеттер.

Эсĕ пирĕншĕн Çын пулнă
Пĕлĕтсем çинчен анса.
Эсĕ маншĕн асапланнă
Çав тери мана савса.

Тивлетне мана паратăн,
Пĕрлешетĕн манпала.
Ху патна мана чĕнетĕн,
Савăнатăп Санпала.

Туррăм, Туррăм, чĕлхеме уç,
Тÿрĕ шухăш пар мана.
Пуринчен ытла тавтапуç
Ĕнентернĕшĕн Сана.

Ху çинчен пире пĕлтертĕн
Хăватсем туса парса;
Тăлăх арăма хĕрхентĕн
Ывăлне чĕртсе парса.

Наира та хĕрхентĕн
Пĕртен-пĕр хĕрне чĕртсе.
Тăлăх хĕрсене хĕрхентĕн
Тăванне чĕртсе парса.

Пилĕк çăкăр тăрантарнă
Пилĕк пин çын ушкăнне.
Хăвату çиле час чарнă
Хумхатмарăн шыв хумне.

Апостолусем каланă
«Турă Ывăлĕ» тесе.
Шуйттансем санран хăранă,
Путнă кайнă шыв тĕпне.

Чирлĕ çынсене сыватнă
Пĕтĕм халăх умĕнче.
Хăватна пире кăтартнă,
Манас çук ăна тĕнче.

Чĕреме уçса кўртетĕн
Хăвăн ырă хыпарна,
Çимĕç вырăнне илетĕп
Ăшăмпа Сан сăмахна.

Кириллов, Тарас Кириллович (1880-1921). Суйласа илнисем : сăвăсем, поэмăсем. - Шупашкар : ЧПГĂИ, 2010. – С. 123.